# «СЕНКЕР ИНҪЕТ» ШКУЛ АЧИСЕН ОЛИМПИАДИ

## ЧӐВАШ ЧӖЛХИПЕ ЛИТЕРАТУРИ (чӑваш шкулӗсем)
**10-11 кл.**

ПӖТӖМЛЕТӰ ТАПХӐРӖН ЫЙТӐВӖСЕМ

1. ***Сапӑр*** паллӑ ятне танлаштару степенӗнчи палӑрту форминче, нумайлӑ хисепре, камӑнлӑх падежӗнче ҫырӑр.

2. *Ӗмӗрхи йывӑҫсем аваллӑх паллисене паянччен упраҫҫӗ.*

Панӑ тӗслӗх хӑш ыйтӑвӑн хуравӗ пулать?

1) Камсем аваллӑх паллисене паянччен упраҫҫӗ?
2) Мӗнсем аваллӑх паллисене паянччен упраҫҫӗ?
3) Ӗмӗрхи йывӑҫсем аваллӑх паллисене хӑҫанччен упраҫҫӗ?
4) Ӗмӗрхи йывӑҫсем паянччен мӗн(е) упраҫҫӗ?

3. Чи анлӑ ят сӑмах майлашӑвне ҫырса илӗр те тӗп компонентне палӑртӑр.

*Тепӗр самантран пӳрт ҫине витнӗ хӗҫ-тимӗр ҫинчи тумламсем хӗртнӗ ҫатма ҫинчи пӑрҫасем пек сиккелесе ташлама пуҫларӗҫ.*

4. Вырӑсла куҫарӑр: *сар ҫу, сар ҫип ути.*

5. Хутлӑ предложени тӗсне палӑртӑр, хутсӑр предложенисем мӗнле мелпе ҫыхӑннине калӑр.

*Каччӑ ун ҫине сӑнаса пӑхнине сиссен хӗр тӑруках именсе хӗрелчӗ.*

6. Мӗн вӑл тетралоги?

7. Ҫак йӗркесем хӑш хайлавран? Авторӗ кам?

*«Юрӑра хисеплеҫҫӗ ҫӳллӗ ҫынна, тӳрӗ, сарлака кӗлеткене, вӑйлӑ ҫынна, ҫирӗп кӑкӑрлӑ, ҫутӑ сӑнлӑ, тулли питлӗ, таса уҫӑ саслӑ, ҫӑмӑл ураллӑ ҫынна. Хитре хӗрсем яштак пулмалла, вӗсен пӗвӗ Атӑл хӑви пек яштак, сасси хур кайӑк сасси пек пулмалла…»*

8. Сиктерсе хӑварнӑ йӗркене аса илӗр:

*Йӑлт пушатсах каймастпӑр тӗнчене:*

……………………………………………

*Хӗрхенмелле камалсӑр ҫынсене:*

*Ют ҫын хупать вӗсен куҫӗсене.*

9. Чӑваш халӑхне панӑ Халала И.Я. Яковлев хӑҫан ҫырнӑ?

10. «Этем ырӑ ӗҫӗпе» темӑпа сочинени-шухӑшлав ҫырӑр, чӑваш литературинчи тӗслӗхпе ҫирӗплетӗр.